Вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе

Пĕлӳ тĕнчине çул уçă

Юлашки вăхăтра Муркаш районĕнче ырă улшăнусем сахал мар пулса иртрĕç. Экономика аталанăвĕ те çӳллĕрех шая çĕкленчĕ.

Пурнăç улшăнса аталанса пынă май вĕрентӳ системинче те çĕнĕ технологисемпе усă курма тивет. Пĕрремĕш çур çул хушшинче вĕрентӳ учрежденийĕсем мĕнле ĕçлесе пынă, инновацион программисемпе мĕнле ĕçлесе пыраççĕ? Çак тата ытти ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçинчен Л.И. МОЧАЛОВРАН.

– Леонид Иванович, вĕрентӳ системинче пĕрремĕш çур çул мĕнле вĕçленчĕ?

– Çамрăк ăрава пахалăхлă вĕрентӳ, воспитани парасси – кăткăс ĕç. Çавăнпа та хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçлас тесе эпир сахал мар тăрăшатпăр. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Раççей Федерацийĕнче вĕрентӳ системин пахалăхне ӳстерес тесе приоритетлă тĕллевсем лартнă.

Вĕрентӳ системине аталантарассипе йышăннă указа пурнăçласа районта çĕнĕлĕхсемпе усă куракан учительсем валли 5-шер пин тенкĕлĕх 20 грант, инновациллĕ вĕрентӳ программисене шкул коллективĕсем валли 20-шер пин тенкĕлĕх 5 грант туса хунă. Раççей Президенчĕн премине, Чăваш Республикин Президенчĕн тата Муркаш район пуçлăхĕн гранчĕсене илме тăратнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул ĕçĕсене хаклама 2005 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче обществăлла экспертиза кунĕ ирттернĕ. Кунта 10 шкул хутшăннă: Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Калайкасси, Йӳçкасси, Нискасси, Оринин, Çатракасси, Шетмĕпуç, Сосновка шкулĕсем, Муркаш лицейĕ.

Муниципаллă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисем хушшинчи конкурс пĕтĕмлетĕвĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче Муркаш район пуçлăхĕн грантне 5 вĕрентӳ учрежденийĕ тивĕçнĕ.

Республикăри конкурс комиссийĕн пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш лицейĕ Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премине 1 млн. тенкĕне, Калайкассинчи вăтам шкул Чăваш Республикин Президенчĕн грантне 200 пин тенкĕне тивĕçнĕ. Ку премисем вĕрентӳ учрежденийĕсен пурлăхне, техника базине пуянлатма, вĕрентекенсен квалификацине ӳстерме кайĕç.

– Педагогсен прфесси ăсталăхне мĕнле хаклатăр?

– Шкул ачи пысăк пĕлӳллĕ пултăр тесен чи малтан педагогăн профессии ăсталăхĕ пысăк пулмалла. Районта пĕтĕмпе 630 вĕрентекен вăй хурать. Вĕсенчен чи пысăк квалификациллисем – 6 процент, пĕрремĕш разрядлисем – 45 процент, иккĕмĕш разрядлисем – 38 процент.

Вĕрентекенсен ăсталăхне туптама тĕрлĕ конкурссем ирттереççĕ. Республикăра ирттернĕ тĕрлĕ шайри фестивальсенче, конкурссенче В.В. Смирнова (Муркаш шкулĕ) 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, Мускава кайма тивĕç пулчĕ. А.Ю. Герасимова (Турай шкулĕ) 3-мĕш вырăн тата 300 тенкĕ преми, Н.В. Семенова (Йӳçкасси шкулĕ), А.В. Лескина (вĕрентӳпе çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн программисчĕ) дипломсене тивĕçрĕç. Февраль уйăхĕнче вĕрентекенсем хушшинче район шайĕнче конкурс ирттертĕмĕр. Унта 32-ĕн хутшăнса 10-шĕ республикăна кайма тивĕç пулчĕç.

– Шкулсенче техника бази еплерех?

– Пĕтĕмĕшле илсен, вĕрентӳ учрежденийĕсенче 275 компьютер шутланать. Паяхи куна 19 вĕренекен пуçне пĕр компьютер тивет. 53 проценчĕ Интернет тата электронлă почтăпа усă кураççĕ, 7 шкулта спутник антеннисем вырнаçтарнă. 2006 çулхи январьте çĕнĕ йышши 5 компьютер туяннă. Вĕрентекенсен 68 проценчĕ хăйсен ĕçĕнче информацип коммуникаци технологийĕсемпе усă курать. Çакă вара ачасен таврăкурăмне аталантармалли, тĕнче шайĕнчен тĕрлĕ информацисем илмелли тĕп çăл куç пулса тăрать.

2005 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа 2006 çулхи март уйăхĕччен "Чи лайăх класс ертӳçи-2006" конкурс ирттертĕмĕр, унта хутшăнма 20 вĕрентекен кăмăл турĕ. 1-мĕш вырăна Муркаш шкулĕнчи Н.В. Толстова, 2-мĕш вырăна И.К. Матвеева (Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул) тата Т.Н. Михайлова (Оринини вăтам шкул), 3-мĕш вырăна Т.А. Ершова (Калайкассинчи вăтам шкул) тата О.С. Петрова (Тойкилтĕри вăтам шкул) тивĕçрĕç. Чăваш Республикин вĕрентӳ фончĕн йышăнăвĕпе Надежда Валерьяновна Толстовăна Мускава "Социальная компетентность классных руководителей как ресурс школьного коллектива и эффективного взаимодействия класса и школы" вĕренӳ семинарне янă.

100 шкул ачи вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пынăшăн район пуçлăхĕн ятарлă стипендине илеççĕ. Воспитани ĕçне çĕнетсе улăштарас тĕллевпе тулли класпа ĕçлекен класс ертӳçисене хушма укçа тӳлеççĕ. Пĕтĕмпе вĕсен йышĕ районта 337 çын.

Калас килет, пĕлӳ пухма условисем çителĕклĕ. Вĕреннелле те вĕреннелле, ăс-тăн пухмалла, малалла талпăнмалла. Педагогсен вара таврăкурăмлăрах, тăрăшуллăрах пулмалла, çитĕнекен ăрава тĕрĕс воспитани памалла. Пирĕн, вĕрентӳ ĕçченĕсен, хамăр ума лартнă тĕллевсене татса памалла, татах та пысăк çитĕнӳсем патне утмалла.

Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.

Çĕнĕлĕх

Çирĕпрех мерăсем йышăнма тивĕ

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса район территорийĕнче «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» муниципаллă унитарлă предприяти ĕçлеме пуçларĕ. Район администрацийĕ çак предприятие районти пурăнмалли çурт-йĕр фондне тытса тăрас ĕçе шанса панă. Çапла вара районти муниципаллă çурт-йĕр фондĕнче пурăнакансене тĕрлĕрен коммуналлă услугăсемпе тивĕçтерессин йыттăвĕсем, çурт-йĕрте пурăннăшăн тата коммуналлă услугăсемпе тивĕçтернĕшĕн çынсем укçа вăхăтра тӳлесе тăрассин проблемисем çак предприятин хул пуççийĕ çине тиенчĕç.

Предприяти район прокуратурипе тачă çыхăнса ĕçлет. Пĕрлехи вăйпа çулталăк пуçланнăранпа кăна муниципаллă çурт-йĕр фондĕнче пурăнакансенчен хваттершĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн парăмсене шыраса илме суд хушăвĕ кăларма 228 заявлени тăратнă. Вăл 1 миллион та 378,4 пин тенкĕпе танлашать.

Ку енĕпе чи пысăк парăмçăсем Ярославка ял тăрăхĕнчи Ярославка ялĕнче шутланаççĕ. Кунта нумай хваттерлĕ çуртсем 2 кăна. Унта пурăнакансен парăмĕ вара 401 миллион та 555,46 пин тенкĕпе танлашать.

Пысăк парăмлисем Муркаш, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Ярапайкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче те çук мар. Тĕслĕхрен, Муркашра пурăнакан Владимир Иванович Систейкинăн парăмĕ 30 пин те 67,35 тенкĕпе, Александр Петрович Федькинăн 33 пин те 767,80 тенкĕпе танлашать.

Çавна та каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра парăмлисем тĕлĕшпе вĕсене хăйсем пурăнакан хваттерсенчен ирĕксĕр кăларса яма суд валли материалсем хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Раççей Федерацийĕн пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн хваттер хуçипе унăн çемье членĕсене хăйсем пурăнакан вырăнтан кăларса ярасси пирки суд çакăн чухне йышăну тума пултарать: енчен те вĕсем хваттерте пурăннăшăн тата коммуналлă услугăсемпе усă курнăшăн 6 уйăх ытла тӳлемеççĕ пулсан, пурăнмалли çурт-йĕрпе тĕллевлĕ усă курмаççĕ пулсан, кӳршĕсен прависемпе саккунлă интересĕсене пăсаççĕ е пурăнмалли çурт-йĕрпе тирпейлĕ усă курмаççĕ, ăна юрăхсăра кăлараççĕ пулсан.

Районта кун пек практика пур ĕнтĕ. 2006 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ çемьене хваттертен кăларса яма йышăнчĕ. Ку вăл Ярославка ялĕнчи Центральная урамри 1-мĕш çуртри 1-мĕш хваттерте пурăннă Сариловсен çемйи пулчĕ. Вĕсем 3 çул ытла ĕнтĕ хваттершĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн укçа тӳлемен.

Сариловсене хăйсен ирĕкĕпе хваттертен тухса кайма сĕннĕ. Анчах вĕсем килĕшмен. Çавăнпа та 2006 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнче «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» муниципаллă унитарлă предприяти представителĕ, аслă суд приставĕ, Чăваш Республикинчи суд приставĕсен федераллă службин управленийĕн ĕç тăвакан приставĕсем тата милицин участокри инспекторĕ вырăнта пулчĕç, Сариловсене пурăнакан вырăнтан ирĕксĕрех кăларса ячĕç.

Çавăнпа та çавна каласа хăварасшăн. Парăмсене ӳссе кайма парас марччĕ. Хваттерсенче пурăннăшăн та, коммуналлă услугăсемпе усă курнăшăн та укçана вăхăтра тӳлесе тăрасчĕ.

Л. СМИРНОВА,
«Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» районти муниципаллă унитарлă предприяти юрисчĕ.

Çур çул итогĕсем

Мĕн туни чикĕ ан пултăр

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ

Çур çул итогĕсене тишкерни çакна кăтартса парать. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 12,5 процент пысăкрах пулнă, пĕтĕмпе 204,4 миллион тенкĕпе танлашнă. Ку енĕпе «Сеспель» предприятие çитекенни çук. Ӳсĕм шайĕ кунта 147 процент, пĕтĕм промышленность продукцийĕн шутĕнче 51 процент кунти продукци йышăнать. Муркаш издательство çурчĕ, «Сундырь- хлеб», «Вита» предприятисем те иртнĕ çулхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçленĕ. Шел пулин те, Муркашри сĕт-çу заводĕнче производство калăпăшне 13 процент, «Милград» предприятире 18 процент чакарнă. Сăлтавĕ чи малтанах продукцие ыйтакансем сахал пулнинче. Производствăна аталантарма тĕп фондсем кивелсе пыни, производствăна ерипен çĕнетсе пыни, технологисене аталантарассипе, продукци конкурентлăхĕпе пахалăхĕ тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени ура хураççĕ. Продукци туса кăларассине ӳстерессин кашни проценчĕ ырми-канми ĕçпе тата экономикăна инвестицисем хывнипе çыхăннă. Нумай промышленность предприятийĕсенче кредит тата лизинг услугисемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Пĕчĕк бизнес предприятийĕсенче вара инноваци активлăхĕ ерипен ӳссе пырать. Пĕрремĕш çур çулта процент ставкине субсидилес майпа патшалăх пулăшăвĕпе пĕчĕк предпринимательствăн икĕ предприятийĕ усă курнă. Татах 3 представитель ЧР Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерстви çумĕнчи конкурс комиссийĕнче пăхса тухма документсем хатĕрлеççĕ.

Пысăк квалификациллĕ кадрсем çитменни – çивĕч ыйтусенчен пĕри. Нумай чухне предприяти япăх ĕçлени менеджмент эффективсăрлăхĕпе, рабочисен профессии шайĕ тивĕçтерменнипе çыхăннă. Çакă ĕçпе тивĕçтерекен центр информацийĕнчен те аван курăнать: акă, вакансисемпе шута илнĕ ĕçсĕррисен шайлашăвĕ инженерсем тĕлĕшпе 14 тата 2, агрономсем енĕпе 8 тата 3. Тепĕр профессисем енĕпе вара пачах урăхла ӳкерчĕк: 2 юрист кирлĕ пулсан, кун пеккисем ĕçсĕррисем тесе шута илнисем 10, экономистсем тата бухгалтерсем 5 тата 12. Çав вăхăтрах вара предприятие пысăк пĕлӳллĕ, анализлама тата прогнозсем тума пултаракан ăста специалист кирлĕ пулсан, кун пеккине тупма çук.

СУТУ-ИЛӲ

Килĕшӳ условийĕсене пурнăçласа, ваккăн тавар сутакан предприятисем тавар çаврăнăш калăпăшне ӳстерсе пырассин хăвăртлăхне чакарман. Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăш калăпăшĕ 236 миллион та 818,6 пин тенкĕпе танлашнă, унченхи шайран 15 процент ӳснĕ. Пĕтĕм тавар çаврăнăш калăпăшĕнче апат-çимĕç таварĕсем 82 процент йышăнаççĕ. Пĕчĕк бизнес представителĕсене те шутласан, районĕпе кашни çын пуçне 6448,4 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Çав шутран Мăн Сĕнтĕр райповĕнче – 5319 тенкĕлĕх, Муркаш райповĕнче – 4180 тенкĕлĕх. Пĕтĕм тавар çаврăнăш калăпăшĕнче алкоголь продукцийĕ 26 процент йышăнать е иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 6 процент сахалрах. Çур çулта кашни çын пуçне вăтамран 5 литр та 870 грамм (2005 çулхи çав вăхăтра 6 литр та 200 грамм) алкоголь продукцийĕ сутнă. Пахалăхсăр суя эрехрен çынсене сыхласа хăварас ыйту хальхи вăхăтра çивĕч тăрать. Спиртлă шĕвексем саккуна пăсса сутса административлă майпа правăна пăсни пирки протоколсене халĕ районти шалти ĕçсен пайĕ пăхса тухать.

Январь – июнь уйăхĕсенче 32 миллион та 88,6 пин тенкĕлĕх тӳлевлĕ пулăшу панă. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 41 процент нумайрах.

ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔРПЕ КОММУНАЛЛĂ ХУÇАЛĂХ. СТРОИТЕЛЬСТВО

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлассин программи ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пырать. Çур çулта 548 граждана 414 пин тенкĕлĕх çăмăллăхсем панă. Тĕрлĕ услугăсем пурнăçланăшăн çынсен тӳлесе татман парăмĕ 367 пин тенкĕпе танлашать. Парăмçăсем тĕлĕшпе пĕтĕмпе 1 миллион та 378,4 пин тенкĕ судпа шыраса илме 228 материал хатĕрленĕ.

Инвестици программипе килĕшӳллĕн инженери тата социаллă инфраструктура объекчĕсем тăвас ĕçсем малалла пыраççĕ. Январь – июнь уйăхĕсенче, финансламалли пур çăл куçсене те шутласан, 126 миллион та 587,7 пин тенкĕлĕх инвестицисемпе усă курнă. Пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен ку вăл 28 процент нумайрах. Харпăр хăйсен пурăнмалли çурчĕсене 10040 тăваткал метр (16 процент нумайрах) ĕçе кĕртнĕ. Социаллă ипотека кредичĕ шучĕпе 5 çемье 800 пин тенкĕ кредит илнĕ. Çамрăксене ялта тĕплелле пурăнма майсем туса парас тĕлĕшпе 1 çамрăк çемьене 300 пин тенкĕ кредит панă. Пурнăç условийĕсене лайăхлатма 4 çамрăк çемье 163,4 пин тенкĕ укçа илнĕ. Çур çулта 0,54 километр çулсем çĕнĕрен тунă.

ФИНАНССЕМ ТАТА КРЕДИТ

Пур шайри бюджетсене те налуксем пухассипе килĕшӳ обязательствине 125 процент пурнăçланă. Çулталăк пуçланнăранпа налук тӳлекенсем пĕтĕмпе 33 миллион тенкĕ налук тӳленĕ. Çав шутран 14 процент федераллă бюджета, 52 процент республика бюджетне тата 34 процент вырăнти бюджета. Пухăннă укçа-тенкĕрен 52 процентне вĕрентӳ ĕçне аталантарма, сывлăха сыхлассипе спорт ĕçне аталантарма 17 процентне, культура валли 0,7 процентне, социаллă политика валли 1,2 процентне янă.

СОЦИАЛЛĂ ПОЛИТИКА

Социаллă хӳтлĕх шайĕ епле пулни – общество тăнăçлăхне кăтартакан палăрăмсенчен пĕри. Çынсене хӳтлĕх парас тĕлĕшпе пĕтĕмпе 17 миллион та 202 пин тенкĕпе усă курнă. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пенсионерсен хисепĕ 10520 çын пулнă. Вĕсене 150 миллион тенкĕ пенси тӳленĕ. Пенсин вăтам виçи 2212 тенкĕпе танлашнă, унăн виçи иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 295 тенкĕ пысăкрах.

Ĕçсĕррисем тесе официаллă регистрацилесем 60 çын. Ĕçсĕрлĕх шайĕ ĕçлеме пултаракан çынсен 0,29 проценчĕ чухлĕ.

ВĔРЕНТӲ ĔÇĔ

11-мĕш класран 444 ача вĕренсе тухнă. Вĕсенчен 7-шĕ шкула ылтăн медальпе, 12-шĕ кĕмĕл медальпе вĕçленĕ. Кунсăр пуçне 9-мĕш класран вĕренсе тухнă 601 шкул ачинчен пĕтĕмлетӳ аттестацийĕпе 598-шĕ пĕтĕмĕшле тĕп пĕлӳ илни çинчен документсем илнĕ. 35-шĕ вĕсенчен уйрăм тĕслĕ документ илме пултарнă. Кăçал 889 вĕренекен предмет олимпиадисене хутшăннă, вĕсенчен 57-шĕ призлă вырăнсене тивĕçнĕ. Хальхи вăхăтра ĕçпе кану лагерĕсем 16 ĕçлеççĕ, вĕсене 530 вĕренекен çӳрет. 6 шкулта профильлĕ лагерьсем (235 вĕренекен), шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсем 26 (50 вĕренекен) йĕркеленĕ.

СЫВЛĂХА СЫХЛАС ĔÇ

Диагностикăпа сиплевĕн хальхи меслечĕсене пурнăçа кĕртес, медицина ĕçченĕсен квалификацине ӳстерсе пырас, талăкĕпе ĕçлекен стационарсене кăнтăрлахисем çине куçарнипе тата поликлиникăсенче койка-вырăнсем йĕркеленипе çынсене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерме каякан тăкаксене чакарас тĕлĕшпе ĕçсем малалла пыраççĕ. Çур çулта 181 ача çуралнă (унченхинчен 6 ача сахалрах). Вилекенсем 355 çын пулнă (31 çын сахалрах). Вилекенсем çуралаканнсенчен 1,9 хут нумайрах. Çынсем ытларах вилни пĕр енчен халăх «ватăлса» пынипе, тепĕр енчен хăйсен вилĕмĕпе мар, суранланнине, наркăмăшланнине пула вилекенсен йышĕ ӳссе пынипе çыхăннă.

КУЛЬТУРА

Библиотека тата клуб сферинче çĕнĕ технологисем анлăн пурнăçа кĕреççĕ. Çынсене информаци ресурсĕсемпе туллинрех тивĕçтерес тĕлĕшпе районта кăçал пĕрремĕш çур çулта 1 тĕслĕх библиотека уçнă. Кашни библиотека 5-6 хаçат-журнал çырăнса илет. Районти тĕп библиотекăна вара тĕрлĕрен 25 периодика изданийĕ килсе тăрать. Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкне халаллана смотра 52 коллектив хутшăннă, хăйсен пултарулăхне тĕрлĕ жанрта кăтартнă.

Вырма ĕçĕсене туса ирттерессипе тата районăн инфраструктурине аталантарассипе умра пысăк задачăсем тăраççĕ. Министрсен Кабинечĕпе район администрацийĕ тунă килĕшӳри аталану хăвăртлăхĕсенчен чакмасăр производствăн пур сферисенче те палăрăмлă çитĕнӳсем тумалла.